28-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 АПРЕЛЬ 18 ЮНКУН 74(6825) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗӖ

Украинӑри 2-мӗш фронт çарӗсен командующине
Совет Союзӗн Маршалне МАЛИНОВСКИЕ
Фронт штабӗн начальникне
Генерал-полковника ЗАХАРОВА

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт çарӗсем, малалла наступлени туса пырса, паян, апрелӗн 17-мӗшӗнче, Австрин нефть тухакан районӗн центрне—**ЦИСТЕРСДОРФ** хулине туртса илнӗ.

ЦИСТЕРСДОРФ хулине туртса илесшӗн çапӑçнӑ чухне çаксем чапа тухнӑ: **ШУМИЛОВ** генерал-полковникӑн, **ЛУКИН** генерал-майорӑн, **КРУЗЕ** генерал-майорӑн, **ОСТАШЕНКО** генерал-майорӑн, **ГРИГОРОВИЧ** генерал-майорӑн, **ОРЛОВ** полковникӑн, **СМИРНОВ** генерал-майорӑн, **ЛОСЕВ** генерал-майорӑн, **ГРЕЧАНЫЙ** генерал-майорӑн, **ГОРБАЧЕВ** генерал-майорӑн, **МАРОЛЬ** полковникӑн, **ПАНОВ** полковникӑн, **ЕРЕМИН** полковникӑн, **САЛЫЧЕВ** полковникӑн çарӗсем; артиллери генерал-лейтенанчӗн **ДЕРЕШӐН**, артиллери генерал-лейтенанчӗн **ПЕТРОВӐН**, **МИРОНОВ** полковникӑн, **БОГУШЕВИЧ** полковникӑн, **ПАВЛИК** полковникӑн, **ЕВЛИН** подполковникӑн, **ПОПЛЫКО** подполковникӑн. **ПОПОЛЗУХИН** подполковникӑн артиллерисчӗсем; **МЕЛЬНИК** полковникӑн, **БРИЖИНЕВ** полковникӑн, **ЗЕТРЕАНУ** полковникӑн танкисчӗсем; авиаци генерал-полковникӗн **ГОРЮНОВӐН**, авиаци генерал-лейтенанчӗн **СЕЛЕЗНЕВӐН**, авиаци генерал-майорӗн **КАМАНИНӐН**, авиаци генерал-лейтенанчӗн **СТЕПИЧЕВӐН**, авиаци генерал-лейтенанчӗн **ПОДГОРНЫЙӐН** летчикӗсем; **ЦЕПЕНЮК** полковникӑн, **ЕЗЕРСКИЙ** подполковникӑн саперӗсем; **БОРИСЕНКО** полковникӑн, **ДАВЫДОВ** полковникӑн, государство хӑрушсӑрлӑх полковникӗн **КАРПОВӐН** связисчӗсем чапа тухнӑ.

Тунӑ çӗнтерӗве палӑртса хӑварас тесе, **ЦИСТЕРСДОРФ** хулине туртса илесшӗн çапӑçнӑ чухне уйрӑмах чапа тухнӑ соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградӑлама тӑратас.

Паян, апрелӗн 17-мӗшӗнче, 21 сехетре пирӗн Тӑван çӗршыв столици **МУСКАВ**, çӗр çирӗм тӑватӑ тупӑпа вуникӗ хут пӗр харӑс персе, Украинӑри 2-мӗш фронтӑн паттӑр çарӗсене, **ЦИСТЕРСДОРФ** хулине туртса илнӗскерсене, Тӑван çӗршыв ячӗпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, **ЦИСТЕРСДОРФ** хулине туртса илесшӗн çапӑçнӑскерсене, питӗ чаплӑ çапӑçнӑшӑн **ТАВ ТАВАТАП**.

Хамӑр Тӑван çӗршывӑн ирӗклӗхӗпе никама пӑхӑнманлӑхӗшӗн çапӑçса вилнӗ геройсене ӗмӗр-ӗмӗр мухтав!

Нимӗç захватчикӗсене — вилӗм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзӗн Маршалӗ И. СТАЛИН.

1945 çулхи апрелӗн 17-мӗшӗ. № 338.

Суту-илӳ работникӗсене орденсемпе медальсем пани

Апрелӗн 13-мӗшӗнче Шупашкарта суту-илӳ работникӗсен республикӑри канашлӑвӗ уçӑлас умӗн Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ З. А. Андреева юлташ ӗçре уйрӑмах палӑрнӑ суту-илӳ работникӗсене. СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Указӗ тӑрӑх наградӑланӑскерсене, Совет Союзӗн орденӗсемпе медалӗсене пачӗ.

Хӗрлӗ Çӑлтӑр орденне Сӗнтӗр районӗнчи Урпаш ялпо председателӗ А. П. Селюшкин юлташ илчӗ.

Чӑваш АССР Суту-илӳ Халӑх Комиссарӗ И. Т. Братчиков, Чӑвашпотребсоюз президиумӗн председателӗ А. Т. Терентьев, Муркаш ялпо председателӗ М. Г. Григорьев тата Куславкка районӗнчи суту-илӳ отделӗн заведующийӗ С. В. Евсеев юлташсем «Знак Почета» орденӗ илчӗç.

Муркаш райпотребсоюзӗн главнӑй бухгалтерӗ А. И. Ильин юлташ «За трудовую доблесть» медаль, Чӑвашпотребсоюзӗн отдел начальникӗ Д. К. Константинов, Вӑрмар районӗнчи Кавал ялпо председателӗ П. Н. Кудряшов, Чӑвашпотребсоюз работникӗ пулнӑ Г. И. Лизунов тата 4-мӗш магазин директорӗ А. Н. Ткаченко юлташсем «За трудовое отличие» медаль илчӗç.

Орденсемпе медальсем илнӗ юлташсем вӗсен ӗçне пысӑка хурса хакланӑшӑн партипе правительствӑна чӗререн тав турӗç.

Юлашкинчен Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. А. Андреева юлташ награда илнисене саламларӗ, малашне татах та лайӑхрах ӗçлеме сунчӗ.

ВЛКСМ Обкомӗнче

Çамрӑксен бригадисен республикӑри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1945 çулти март уйӑхӗнчи итогӗсем

ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗ, Республикӑри промышленноçпа транспорт предприятийӗсенчи çамрӑксен бригадисен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1945 çулхи март уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, çаксем мала тухнине палӑртнӑ:

Пӗрремӗш вырӑна Канашри вагонсем юсакан заводри Азизова юлташ ертсе пыракан çамрӑксен бригади йышӑннӑ. Вӑл бригадӑна ВЛКСМ Обкомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне памалла тунӑ.

Март уйӑхӗнче Канашри вагонсем юсакан заводри Забавина, Ефимова юлташсем ертсе пыракан бригадӑсем, Ваганова юлташ ВЛКСМ Центральный Комитечӗн комсоргӗ пулса ӗçлекен заводри Симакова, Давыдова, Ефремова, Кормилицина бригадисем, Улатӑрти паровозсем юсакан заводри Погорелова, Манихина, Фильчагова, Артюшина, Мухригина, Любашевский юлташсен бригадисем, Коган юлташ ВЛКСМ Центральный Комитечӗн комсоргӗ пулса ӗçлекен заводри Спасова, Калининкова, Апокина, Чеурина юлташсен бригадисем тата Улатӑр станци деповӗнчи Ерастов юлташ бригади лайӑх ӗçленине палӑртнӑ.

Чехов, Григорович, Золя çырӑвӗсем

Ленинградра Ленкогизӑн авалхи паха кӗнекесем сутакан магазинӗ паллӑ вырӑс писателӗсен, çулçӳревçӗсен тата художникӗсен çырӑвӗсене илнӗ.

Пӗр çырӑвӑн пысӑк мар листисем çинче — Чехов алçырӑвӗн вак саспаллисемпе çырнӑ йӗркесем. 1884 çулта Антон Павлович Скопинри банкра ӗçленӗ çынсен пысӑк процесӗнче «Петербургская газета» тата «Осколки» хаçатсен специальнӑй корреспонденчӗ пулнӑ. «Осколки» хаçат редакторне çырнӑ çырура вӑл çапла пӗлтерет:

«Хисеплӗ Николай Александрович, Рыков çинчен фельетон çырас вырӑнне (вӑл пӗчӗккӗ те япӑх пулнӑ пулӗччӗ, 40—50 йӗркеллӗ фельетонра пӗтӗм процесс çинчен çырас çук), эпӗ сире Скопин картинисене ярса паратӑп. килӗшӗç тесе шутлатӑп... Процесс тата пӗр-икӗ эрнене ытларах та пырӗ... Кирлӗ пулсан, тепӗр номер валли те çавӑн пек картинӑсем ярса парӑп... Питӗ интереслӗ япаласем пур... Пуç таятӑп. Тӗплӗ çыру ыранхи судра çырӑп, халӗ çывӑрас, çывӑрас. Сирӗн **А. Чехов**».

Коллекцире Д. В. Григорович, К. С. Аксаков, К. М. Батюшков, А. Н. Апухтин, Эмиль тата Жорж Занд çырӑвӗсем, паллӑ поляр çулçӳревçисен И. Ф. Крузенштернпа Ф. П. Литке çырӑвӗсем, паллӑ художник-маринист И. К. Айвазовский çырӑвӗсем тата ыттисем те пур. (ТАСС).

ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариатӗнче

ВЦСПС-па пӗр Халӑх Комиссариачӗ, предприятисен Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1945 çулхи март уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, **Слуцкий** юлташ главнӑй инженер пулса ӗçлекен завода **виççӗмӗш преми** пама йышӑннӑ.

Вӑкӑрсемпе анлӑн усӑ куратпӑр

Комсомольски районри Аслӑ Çӗрпӳелӗнчи «Культура» колхозра колхозӑн 10 вӑкӑрне тата колхоз членӗсен 20 ӗнине вӑкӑрӗсене кӳлсе ӗçлеме вӗрентнӗ. Хӗлле вӑхӑтра вӗсемпе хире 1.500 лав ытла тислӗк кӑларнӑ.

Колхозниксен пухӑвӗ çирӗплетнӗ план тӑрӑх, кӳлсе ӗçлеме вӗрентнӗ вӑкӑрсемпе тата ӗнесемпе сӗре çӳреленӗ çерте тата хире вӑрлӑх турттарнӑ çерте усӑ курмалла.

П. ЛЮБИМОВ.

Югослави Министрӗсен Совечӗн Председателӗ И. Броз-Тито Маршал Мускавран тухса кайни

Апрелӗн 16-мӗшӗнче Югослави Министрӗсен Совечӗн Председателӗ Иосиф Броз-Тито Маршал Мускавран тухса кайнӑ. Унпа пӗрле Черногори Еçӗсен Министрӗ М. Джилас генерал-лейтенант, Суту-илӳпе Снабжени Министрӗ Н. Петрович господин тата Сӑрт-ту Промышленность Министрӗ Б. Андреев господин тухса кайнӑ.

Вокзалра И. Броз-Тито Маршала тата унпа пӗрле каякан çынсене çаксем ӑсатса янӑ: СССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗн Заместителӗ тата СССР Ют çӗршыв Еçӗсен Халӑх Комиссарӗ В. М. Молотов, СССР Ют çӗршыв Еçӗсен Халӑх Комиссарӗн Заместителӗ А. Я. Вышинский, Хӗрлӗ Çарӑн Генеральнӑй Штабӗн Начальникӗ арми генералӗ А. И. Антонов, Ф. И. Голиков генерал-полковник, Мускав хула Совечӗн Председателӗн Заместителӗ М. А. Яснов, СССР Наркоминделӗн 4-мӗш Европа Отделӗн Заведующийӗ А. А. Лаврищев, Мускав хулин комендантӗ К. Р. Синилов генерал-лейтенант, А. С. Гундоров генерал-лейтенант, СССР Наркоминделӗн Протокол Отделӗн Заведующийӗн Заместителӗ Г. И. Фомин тата ыттисем те.

Вокзалра çаксем пулнӑ: Югослави Еçӗсен Поверенныйӗ Р. Николевич господин, Югослави Посольствин составӗ, Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Посолӗ А. Гарриман господин, Польша республикин Посолӗ З. Модзелевский господин, Великобритани Посолӗ А. Керр господин, Норвеги Посолӗ Р. Андворд господин, Китай республикин Посолӗ Фу Бин-чан господин, Греци Посолӗ А. Политис господин, Бельги Посолӗ Э. Ле Гэ господин, Мексика Посолӗ Н. Бассольс господин, Итали Посолӗ П. Кварони господин, Монголи Халӑх Республикин Посланникӗ Самбу господин, Эфиопи Посланникӗ Л. Таззас господин, Египет Посланникӗ К. Абдел Рахим Бей господин, Швеци Посланникӗ С. Седерблюм господин, Люксембург Посланникӗ Р. Блюм господин, Болгари Представителӗ Д. Михалчев господин, Чехословаки республикин Еçри Поверенныйӗ Я. Гниздо господин, Канадӑн Еçри Поверенныйӗ Л. Мейранд господин, Турци республикин Еçри Поверенныйӗ А. Курал господин, Австралин Еçри Поверенныйӗ Э. Ашби господин, Коста-Рикӑн Еçри Поверенныйӗ Э. Эспинос господин, Франци республики Посольствин Советникӗ П. Шарпантье господин, çавӑн пекех тата Америкӑри Пӗрлешӳллӗ Штатсен Китайри Посолӗ, çул май Мускавра чарӑннӑскер, П. Хэрли господин пулнӑ.

И. Броз-Тито Маршалпа пӗрле Совет Союзӗн Югославири Посолӗ И. В. Садчиков тата Совет Союзӗн Югославири Çар Миссийӗн Начальникӗ А. Ф. Киселев генерал-майор кайнӑ.

И. Броз-Тито Маршала СССР Наркоминделӗн Протокол Отделӗн Заведующийӗ Ф. Ф. Молочков, Оборона Халӑх Комиссариачӗн Тулашри çыхӑну Отделӗн Начальникӗ М. П. Кутузов генерал-майор тата Югославири Çар Миссийӗн Начальникӗ Р. Приморац генерал-лейтенант ӑсатса яраççӗ.

Ӑсатса янӑ çӗрте хисеплӗ хурал тӑратнӑ тата Югославипе Совет Союзӗн государство гимнӗсене каланӑ. Вокзала Югославипе Совет Союзӗн ялавӗсене çакса илемлетнӗ.

Югослави Министрӗсен Совечӗн Председателӗ И. Броз-Тито Маршал калани

Мускавран тухса каяс умӗн Югослави Министрӗсен Совечӗн Председателӗ И. Броз-Тито вокзалра микрофон умӗнче çапла каланӑ:

«Совет Союзӗн çак аслӑ столицинчен тухса каяс умӗн эпӗ хамӑра кунта ӑшшӑн та кӑмӑллӑн пӑхнӑшӑн Югослави халӑхӗсен ячӗпе тата Югослави Правительстви ячӗпе тав тӑватӑп.

Эпир кунта, Мускавра, пулнин результачӗсем калама çук пысӑк пулӗç, çав результатсем Югослави малашне аталанса пырас ӗçре питӗ пысӑк вырӑн йышӑнӗç.

Совет Союзӗн аслӑ çулпуçӗ ертсе пыракан Совет Правительствине эпӗ Югославие пулӑшнӑшӑн тав тӑватӑп.

Сывӑ пултӑр аслӑ Совет çӗршывӗ тата унӑн аслӑ çулпуçӗ Сталин Маршал!»

Перекет кассисене хунӑ укçасем тӑрӑх пулнӑ выляв

Апрелӗн 10-мӗшӗнче Шупашкарта Чӑваш республикинчи перекет кассисене хунӑ укçасем тӑрӑх 5-мӗш выляв пулса иртрӗ.

200 процентлӑ пысӑк выляв 671-мӗш номер çине тухнӑ. 100 процентлӑ выляв 483-мӗш тата 797-мӗш номерсем çине тухнӑ.

Перекет кассисене хунӑ укçасен çитес вылявӗ çак çулти октябрь уйӑхӗнче пулать.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Инвалидсен кооперациа артелӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1945 çулхи март уйӑхӗнчи итогӗсем çинчен

Чӑваш АССР Халӑх Комиссарӗсен Совечӗ, республикӑри инвалидсен кооперациа артелӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1945 çулхи март уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, ӑмӑртура çаксем мала тухнине палӑртнӑ:

Шупашкарти «Чебторгин» артель (правлени председателӗ Н. Мицина юлташ, хула Совет исполкомӗн председателӗ П. Аникин юлташ) мӗнпур продукци туса кӑлармалли плана 110 процент, ӗççынсем валли куллен кирлӗ таварсем туса кӑлармалли плана 115 процент тултарнӑ. Ӑна Чӑваш АССР Совнаркомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тата 13.000 тенкӗ преми пама йышӑннӑ.

Канашри «Красный воин» артеле (правлени председателӗ Корчагин юлташ, хула Совет исполкомӗн председателӗ Кизилов юлташ) 10.000 тенкӗ преми памалла тунӑ.

Март уйӑхӗнче Улатӑрти «Союз инвалидов», Йӗпреçри «Помощь», Чакаларти «Красный стрелок» тата Ильинкӑри «Производственник» артельсем лайӑх ӗçленине палӑртнӑ.

ВЛКСМ Обкомӗпе промкооперации управленийӗнче

Республикӑри промкооперации артелӗсенчи çамрӑксен бригадисен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн итогӗсем

ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗпе промкооперации Управленийӗ промысла кооперации артелӗсенчи çамрӑксен бригадисен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн март уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухнӑ. Ӑмӑртура **Шупашкарти «Вышивка» артельти Маркелова юлташ ертсе пыракан** çамрӑксен бригади пӗрремӗш вырӑна тухнӑ. Вӑл бригадӑна ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗпе промкооперации Управленийӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне тата пӗрремӗш преми пама йышӑннӑ. Унсӑр пуçне бригадира 300 тенкӗ, бригадӑн членӗсене кашнине 150-шер тенкӗ укçа парса премилемелле тунӑ.

Иккӗмӗш вырӑна **Шупашкарти «Пекарь» артельти Николаева юлташ ертсе пыракан** çамрӑксен бригади йышӑннӑ. Вӑл бригадӑна иккӗмӗш преми, бригадирне 200 тенкӗ тата бригада членӗсене кашнине 100-шер тенкӗ укçа парса премилеме йышӑннӑ.

Виççӗмӗш вырӑна **Сӗнтӗр районӗнчи Янашри «Дружба» артельри Цветкова юлташ ертсе пыракан** çамрӑксен бригади йышӑннӑ. Бригадӑна виççӗмӗш преми, бригадира 150 тенкӗ, бригада членӗсене кашнине 75-шер тенкӗ укçа парса премилеме йышӑннӑ.

1945 çулти март уйӑхӗнче Караньялӗнчи (Октябрьски район) «Труд» артельти Николаева юлташ бригади, Шупашкарти «Вышивка» артельти Иванова юлташ бригади, Шупашкарти «Красный кустарь» артельти Заикина бригади тата Çӗрпӳ районӗнчи Апаккасси артелӗнчи Прокопьева юлташ бригади лайӑх ӗçленине палӑртнӑ.

ВЛКСМ Обкомӗпе Ӗç резервӗсен управленийӗнче

Чӑваш республикинчи ремесло тата чугун çул училищисемпе ФЗО шкулӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1945 çулхи пӗрремӗш кварталти итогӗсем

Чӑваш АССР Совнаркомӗ çумӗнчи Ӗç резервӗсен Управленийӗпе ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗ ремесло тата чугун çул училищисемпе ФЗО шкулӗсен республикӑри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1945 çулхи 1-мӗш кварталти итогӗсене пӑхса тухнӑ.

Ӑмӑртура **Улатӑрти 8-мӗш номерлӗ ФЗО шкулӗ** (директорӗ Сударчиков юлташ, директорӑн политика енӗпе ӗçлекен заместителӗ Черняк юлташ, ВЛКСМ Комитечӗн секретарӗ Малина юлташ) мала тухнине палӑртнӑ. Ку шкул ремесло тата чугун çул училищисемпе ФЗО шкулӗсен Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1-мӗш кварталти условийӗсене пӗтӗмӗшпех пурнӑçланӑ.

Шкула Чӑваш АССР Совнаркомӗ çумӗнчи Ӗç резервӗсен Управленийӗпе ВЛКСМ Обкомӗн куçса çӳрекен Хӗрлӗ Ялавне памалла тунӑ. Унсӑр пуçне ку шкула премилеме СССР Совнаркомӗ çумӗнчи Ӗç резервӗсен Тӗп Управленийӗпе ВЛКСМ Центральный Комитетне тӑратма йышӑннӑ.

Ӑмӑртура иккӗмӗш вырӑна **Шупашкарти 7-мӗш номерлӗ ФЗО шкулӗ** (директорӗ Рождественский юлташ, директорӑн политика енӗпе ӗçлекен заместителӗ Серякова юлташ, ВЛКСМ комитечӗн секретарӗ Леонтьева юлташ) тухнӑ.

Улатӑрти 1-мӗш номерлӗ чугун çул училищинчи Зябликов тата Андрейчик мастерсен группипсем тата Улатӑрти 8-мӗш номерлӗ ФЗО шкулӗнчи Хренов мастерӑн группийӗ лайӑх ӗçленине палӑртнӑ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

АПРЕЛӖН 16-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Апрелӗн 16-мӗшӗнче Земланд çурутравӗнче, КЕНИГСБЕРГРАН çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре тата хӗвеланӑçнерехре, БЕЛОРУССИРИ 3-мӗш фронт çарӗсем çаплах малалла тапӑнса пынӑ, халӑх пурӑнакан 40 пункта ытла çапӑçса туртса илнӗ, вӑл шутра—ГЕРМАУ, ПОВАЙЕН, РОТЕНЕН, ЗАЛЬТНИКЕН, ГОДНИКЕН, ВОНАУ, КАЛЛЕН, ГАЙДАУ, ГРОСС БЛЮМЕНАУ, ФОРКЕН, КОББЕЛЬБУДЕ ятлӑ пысӑк ялсем. Тӗрӗсрех палӑртнӑ тӑрӑх, апрелӗн 15-мӗшӗнче фронт çарӗсем 3.000 çынна мар, 6.600 нимӗç салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ тата çакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: самолетсем—50, хир тупписем — 110, пулеметсем—295.

Чехословаки çӗрӗнче УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт çарӗсем, тӑшман хирӗç тӑнине çӗнтерсе пырса, БРЖЕСЛАВ хулине тата НОВАЯ ЛГОТА, ВЕЛКА, ЛИПОВ, ШАРЛИЦЕ, ТОВОРАНЬ, ЧЕЙЦ, БРУМОВИЦЕ, ГОРНЫЕ БОЯНОВИЦЕ, СТАРОВИЧКИ, ЗАЕЧИ, РАКВИЦЕ ялӗсене çапӑçса туртса илнӗ. ВЕНӐРАН çурçӗртерехре фронт çарӗсем Австри çӗрӗнче ГАВАЙНСТАЛЬ, ТРАУНФЕЛЬД, ШЛЕЙНБАХ, МАНХАРТСБРУН, ШТЕТТЕН, ЦЕОБЕНСДОРФ ялӗсене туртса илнӗ.

ВЕНӐРАН хӗвеланӑçнерехре УКРАИНӐРИ 3-мӗш фронт çарӗсем, ДУНАЙ шывӗн кӑнтӑр хӗррипе наступлени туса пырса, Австри çӗрӗнче халӑх пурӑнакан 30 пункта ытла туртса илнӗ, вӑл шутра—ВАГРАМ, МУФСДОРФ, КЛЕЙН-РУСТ, ОБЕР-МАМАУ, ВИТЦЕНДОРФ, ШВАДОРФ ятлӑ пысӑк ялсем. Çакӑнпа пӗр вӑхӑтрах ГРАЦ хулинчен хӗвелтухӑçнерехре фронт çарӗсем ФЮРСТЕНФЕЛЬД хулине çапӑçса туртса илнӗ. Апрелӗн 16-мӗшӗнче пулса иртнӗ çапӑçусенче фронт çарӗсем 2.000 нимӗç салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ тата çакӑн пек трофейсем тытса илнӗ: танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем—98, хир тупписем—93, минометсем—183, пулеметсем—337, автомашинӑсем—826, снарядсем тиесе лартнӑ вагонсем—600, çар пурлӑхӗн склачӗсем—10.

Фронтӑн ытти участокӗсенче тӗллӗн-тӗллӗн çапӑçнӑ тата разведчиксем шыраса çӳренӗ.

Апрелӗн 15-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 110 танкӗпе хӑй тӗллӗн çӳрекен туппине çӗмӗрсе тӑннӑ. Сывлӑшри çапӑçусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 80 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Земланд çурутравӗнче, Кенигсберг хулинчен çурçӗр-хӗвеланӑçнерехре тата хӗвеланӑçнерехре. Белоруссири 3-мӗш фронт çарӗсем çаплах ӑнӑçлӑ наступлени туса пынӑ. Тӑшман, Фишхаузен хулипе Пиллау портне хӳтӗлесе, хытӑ хирӗç тӑрать. Совет пехотинецӗсемпе танкисчӗсем, артиллери хӑватлӑн пулӑшса пынипе, нимӗçсен Фишхаузен хулипе Пальмикикен хушшинчи чугун çул линийӗ тӑрӑх тунӑ оборонине татнӑ. Фишхаузен хулинчен 7 километр çурçӗртерехре ларакан вайлӑ çирӗплетнӗ Годникен ялне тытса илнӗ. Пирӗн ытти чаçсем Фишхаузен хулин тулашри оборона ункин укрепленийӗсен ӑшне вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та тӑшманпа Фишхаузен хулинчен çурçӗр-хӗвелтухӑçнерехре çапӑçма пуçланӑ. Фриш-Гаф заливӗн çурçӗр хӗррипе наступлени туса пыракан çарсем, тӑшман вӑрмансенче йывӑçсем йӑвантарса тунӑ чӑрмавсем, инженери чӑрмавӗсем тата минӑсем лартса тултарнӑ вырӑнсем урлӑ каçа-каçа, гитлеровецсенчен аслӑ вӑрманӑн çурçӗр-хӗвелтухӑç пайне тасатнӑ. Пирӗн танксемпе хӑй тӗллӗн çӳрекен тупӑсем тата пехота, çӳреме йывӑр вырӑнпа пырса, Кенигсберг-Вик бухтин хӗвелтухӑç хӗррине çитнӗ. Çавӑнти самсаха Фишхаузен хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑçнерехре хӳтӗлесе тӑракан нимӗç çарӗсен ушкӑнне хӑйсен тӗп вайӗсенчен татнӑ та пӗтерсе пыраççӗ. Пирӗн çарсем нимӗçсенчен танк, пӗр бронепоезд тата тӗрлӗрен çар хатӗрӗсем тиенӗ 300 автомашина тытса илнӗ. Кун каçиччен 6.000 нимӗç салтакӗпе офицерне çити пӗтерсе тӑкнӑ, 48 танкпа хӑй тӗллӗн çӳрекен туппа çунтарса янӑ е персе çӗмӗрнӗ. Тыткӑна лекнисем каласа кӑтартнӑ тӑрӑх, нимӗçсен 83 пехотнӑй полкӗнче мӗн пурӗ те 80 салтак кӑна тӑрса юлнӑ, тинӗс пехотин 123-мӗш батальонне пӗтӗмӗшпех пӗтерсе тӑкнӑ. 62-мӗш артиллери дивизионӗ хӑйӗн материальнӑй чаçне пӗтӗмӗшпех çухатса пӗтернӗ. Аркатса тӑкнӑ 561-мӗш пехотнӑй дивизин юлашкийӗсенчен тӑшман пӗр туллимар полк туса хунӑ.

Пирӗн авиаци пӗр чарӑнмасӑр тӑшманӑн речӗсене тата нимӗç çарӗсен Земланд çурутравӗнчи тылӗсене пыра-пыра çапать. Фишхаузен хулипе Пиллау порчӗ хушшинчи çул темиçе пин автомашинӑпа тата лавпа тулса ларнӑ. çав вырӑнсене совет штурмовикӗсемпе бомбардировщикӗсем йышлӑн пыра-пыра çапаççӗ. Сывлӑшри çапӑçусенче нимӗçсен 4 самолетне персе ӳкернӗ тата аэродромсенче 25 самолет пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Чехословаки çӗрӗнче Украинӑри 2-мӗш фронт çарӗсем çаплах малалла тапӑнса пынӑ. Нимӗçсен Дыйе шывӗ çинчи оборонин тӗреклетнӗ паха пункчӗ пулса тӑракан Бржеслав хулишӗн хаяр çапӑçусем пулса иртнӗ. Тӑшман çак хулан кивӗ крепость укрепленийӗсене лайӑхлатнӑ та хулана пырса кӗмелли вырӑнсенче дотсемпе дзотсем нумай туса тултарнӑ. Нимӗçсем урамсенче çапӑçма хатӗрленсе тӑнӑ. вӗсем çуртсен стенисенче тупӑсемпе пулеметсем валли шӑтӑксем хатӗрлесе хунӑ. Тӑшман хирӗç тӑнине çӗнтерсе пырса, совет çарӗсем Бржеслав хулин çурçӗр-хӗвелтухӑç хӗррине вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та тӑшманпа урамсенче çапӑçма тытӑннӑ. Çав вӑхӑтра пирӗн Дыйе шывӗн шурлӑхлӑ хӗррипе куçса пыракан ытти чаçсем хулан кӑнтӑр хӗррине çитсе кӗнӗ. Нимӗçсем пирӗн çарсене хула патӗнчен сирсе яма хӑтланса темиçе хут та контратакӑсем тунӑ. Çӗрӗпех вайлӑ çапӑçусем пынӑ. Пирӗн подразделенисем хулан хӗвелтухӑç пайне тӑшмантан тасатнӑ. унтан артиллери персе хӳтӗлесе тӑнипе Дыйе шывӗ урлӑ каçса кайнӑ та хулан хӗвеланӑç пайне штурмласа туртса илнӗ.

Венӑран çурçӗртерехре фронт çарӗсем çапӑçса малалла куçса пынӑ. Пирӗн наступлени туса пыракан чаçсене чарма хӑтланса, тӑшман кунти çапӑçусенче хӑйӗн танкӗсен пысӑк вайӗсене кӗрте-кӗрте ярать. Кун каçиччен нимӗçсен 39 танкӗпе хӑй тӗллӗн çӳрекен туппине персе çӗмӗрнӗ е çунтарса янӑ.

Совет воинӗсем тӑшманпа хаюллӑн та паттӑррӑн çапӑçаççӗ. Ладейщик красноармеец тӑшман траншейине чи малтан вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ та 4 гитлеровецпа автоматпа персе вӗлернӗ. Нимӗçсен ытти салтакӗсем хӑйсен пулеметне пӑрахса тарнӑ. Отделени командирӗ Колякин сержант, гранатӑсем вӑркӑнтарса, нимӗç пулеметне унӑн расчечӗ-мӗнӗпех пӗтерсе тӑкнӑ. Колякин сержантӑн отделенийӗнчи боецсем кун каçиччен 30 нимӗç салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Пулеметчик Кочмуратов красноармеец тӑшман контратакине сирсе янӑ чухне тӑшманӑн 40 автоматчикне ытла пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Венӑран хӗвеланӑçнерехре Украинӑри 3-мӗш фронт çарӗсем, тӑшманпа çапӑçса, Дунай шывӗн кӑнтӑр-хӗррипе малалла тапӑнса пынӑ. Ӗнер Санкт-Пельтен хулине туртса илнӗ совет чаçӗсем чылай ялсене йышӑннӑ. Грац хулинчен хӗвелтухӑçнерехре пирӗн çарсем, сӑртлӑ-вӑрманлӑ вырӑнти йывӑр условисенче кӗрешсе, Лафнитц шывӗ урлӑ каçнӑ. Тӑшман, малтанах хатӗрлесе хунӑ оборона позицийӗсемпе усӑ курса, çав шывӑн хӗвеланӑç хӗррине хытӑ хирӗç тӑнӑ. Совет чаçӗсем нимӗçсен оборонине татнӑ та Грац хулинчен 45 километр хӗвелтухӑçнерехре ларакан Фюрстенфельд хулине туртса илнӗ.

Берлинри радио паян çакӑн пек пӗлтерне. «Фюрстенфельд хули районӗнче Германи çарӗсем оборонӑра пысӑк çитӗнӳ тунӑ», тенӗ. Берлинри радио çапла пӗлтерне вӑхӑтра нимӗçсене Фюрстенфельд хулинчен хаваласа кӑларнӑ пулнӑ ӗнте, совет çарӗсем пыра-пыра çапнипе вӗсем ку хуларан хӗвеланӑçнелле каялла чакса пынӑ.

Çураки умĕн

Клевер акаççĕ

Вăрнар районĕнчи чылай колхозсем клевер акма тытăннă. Çĕнĕ Алтăшри «Волга» колхоз 30 гектар ытла акнă. Клевер акас ĕçре М. Васильева, А. Степанова, М. Уварова колхозницăсем лайăх ĕçлеççĕ, вĕсем малтанхи кунах ĕç нормине 150 процент тултарнă.

Кĕçĕн Кипекри «Память Ленина» тата «Çутталла» колхозсем кашниех 11-шер гектар. Ленин ячĕпе тăракан колхоз 15 гектар клевер акнă.

(Хамăр корр.).

Лашасем юсанчĕç

ЙĔПРЕÇ. Пысăк Упакасси ял Советне кĕрекен «Побела», «Трудовик», «Строитель» колхозсенче икĕ-виçĕ эрне каялла ырхан тата чирлĕ лашасем чылайччĕ. Конюхсем тăрăшса ĕçленине тата ветеринари работникĕсем вĕсене пулăшса пынипе пула, колхозсенчи лашасем халĕ лайăхланчĕç тата чирлисем те сывалчĕç. Ветеринари фельдшерĕ Н. Павлов юлташ кашни кунах витере лашасене сыватасшăн пĕтĕм вăйне хурса ĕçлерĕ.

П. КУРАКОВ. (Хамăр корр.).

Плугсем хатĕр мар

Муркаш районĕнчи Шетмĕ Пуç ял Советне кĕрекен «Çĕнĕ хунав» колхозăн кăçал вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене лайăх тасатса хунă. Сортсăр çĕрулмине «Лорх» сортлине 161 центнер улăштарнă. Кĕрхи тырă калчисене апатлантарма 10 центнер кĕл, 6 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ хатĕрлесе хунă. Тĕштырă вăрлăхĕсене яровизациleме те хатĕр. Лашасем мăнтăр та вăйлă, вĕсене уйрăм колхозниксем çумне çирĕплетнĕ. Суракине ирттерме план та туса хатĕрленĕ. Анчах колхоза кирлĕ 26 плугран 15 плугне кăна юсаса хунă, ыттисем халĕ те хатĕр мар.

Б. ЯКОВЛЕВ.

Калинино районĕнче çуракине мĕнле хатĕрленеççĕ

Калинино районĕнчи колхозсем çуракине ирттерме мĕнле хатĕрленнине государство комиссийĕсем тĕрĕслесе тухрĕç. Сак тĕрĕслӳсем районри чылай колхозсем çуртырисене акса хăварма тĕплĕн хатĕрленсе çитнине кăтартса параççĕ.

Услапари «Броневик» колхоз кăçал 277 гектар тĕштырă тата пăрса йышши тырăсем акса хăвармалла. Колхоз вĕсене 9 кун хушшинче акма палăртнă. Вăрлăхсем çителĕклĕ тата вĕсене тасатса хунă. Пăрса, урпа, вика вăрлăхĕсене 1-мĕш класпа, тулă, сĕлĕ вăрлăхĕсене 2-мĕш класпа кондицие çитернĕ. Ялхуçалăх машинисене пысăк пахалăхпа юсанă, ут тавраш-ĕсемпе вĕрен-пăявсене ытлашшипех хатĕрленĕ. Бригадăсем хушшинче ăмăрту договорĕсем çырса колхозниксемпе çутсе-явнă. Колхоз Çавалкасри «Çутталла» колхозпа ăмăртăва тухнă.

Çуллахи уйхир ĕçĕсене пурне те агротехника хушнă пек туса пырас тесе, колхоз агрономĕ С. Воробьев юлташ хĕллехи вăхăтсенче 52 колхозника кружокра агротехникăна вĕрентнĕ. Вĕсенчен чылайăшĕсем сухаççем, сӳреççем пулса ĕçлемелле. Çуракинче 5 сеялкăпа тĕштырăсен 70 процентне акса хăвармалла. Кун та сеялщиксене те агрокружокра вĕрентсе хатĕрленĕ.

Ĕç лашисене лайăх апат çине тăратнă тата çуракине ирттермелĕх ытлашшипех утă, сĕлĕ, посыпка хатĕрлесе хунă.

Парти пуçламĕш организацийĕ çураки вăхăтĕнче ĕçлеме коммунистсемпе комсомолецсене агитаторсем, хаçат вулакансем, стена хаçат редакторĕсем пулса ĕçлеме уйăрса çирĕплетнĕ. Колхоз правленийĕ ĕçе тĕрĕслесе пыма пахалăх комиссийĕсем уйăрнă.

«Броневик» колхозпа ăмăртакан «Çутталла» колхоз та çуракине лайăх хатĕрленсе çитнĕ.

Çав хушăрах районри хăшпĕр колхозсем çуракине пуçăнма халĕ те хатĕр мар. Тури Кăканарти «Правда» колхозăн вăрлăхсем çителĕклĕ, вĕсене тасатса кондицие лартнă. Анчах та ялхуçалăх машинисене лайăх юсассишĕн тăрăшман. Комиссси тĕрĕсленĕ, плугсемпе сӳресенчен пурте тенĕ пекех ĕçе юрăхсăр.

М. Петрова юлташ ертсе пыракан 1-мĕш бригадăри сӳресен шăлĕсем 10-шар сантиметр тăршшĕ кăна, кăшт тĕксĕнех хуçăла-хуçăла ӳкеççĕ. Тимĕрçĕ лаççинчен «юсаса кăларнă» плугсене кантрасемпе çысса пĕтернĕ тата йывăç савăлсем çапнă. Вĕсене тасатма калексем туса хатĕрлемен.

Тури Карачурари «Ленин çулĕпе» колхозра çуракине тимлĕн те тĕплĕн хатĕрлепме вăхăт та, условисем те пулнă. Анчах, колхоз руководителĕсем тăрăшманнипе пула, ку колхозра вăрлăхсене тасатса çитермен, ĕç планĕ туса колхозниксем хушшинче сӳтсе-явман. Лашасемпе ĕç хатĕрĕсене уйра ĕçлеме палăртнă колхозниксем çумне çирĕплетмен.

Суракине ирттерме «Победа», Буденный ячĕпе тăракан, «Чăваш Коммуни», «КИМ» колхозсенче япăх хатĕрленнĕ. Хăшпĕр вăрлăхсене халĕ те хатĕрлесе çитермен. Ку колхозсенче районран вăрлăх тупса парассине кĕтсе ларасси йăлана кĕнĕ. Çав колхозсен руководителĕсене çуракине хатĕрленес енĕпе вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçлеттерес тĕлĕшпе райçĕрĕç пайĕ нимĕнле мера та йышăнман-ха.

«Трактор», Сталин ячĕпе тăракан колхозсем çуракине ирттерес тĕлĕшпе хăрушлăх умĕнче тăраççĕ. Мĕншĕн тесен, вăл колхозсенчи ĕç лашисем çурри ытла вăйсăр тата чирлĕ. Лашасене чиртен сыватас тĕлĕшпе райçĕрĕç пайĕн врачĕсемпе зоотехникĕсем сахал тăрăшаççĕ.

Калинино районĕнчи колхозсенче вăйлă тырпул туса илме пур майсем те пур. Çуракине вăхăтра ирттерме вăрлăх та, туртăм вăйĕ те çителĕклĕ. Колхозсенче тракторсем те ĕçлемелле. Анчах МТС паянхи куна çуракине хатĕр мар-ха. Тракторсене тата вĕсенчен кăкарса ĕçлемелли машинăсене юсаса пĕтермен. МТС дирекцийĕпе парторганизаци çуракине хатĕрленсе çитес тĕлĕшпе çителĕксĕр тăрăшаççĕ.

Е. ВОРОБЬЕВ. (Хамăр корр.).

Уяв тĕлне клуб юсаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Районри малта пыракан колхозсем Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Тиңсырма ял Советĕнчи «Буксир» колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем, республикăри ялхуçалăх работникĕсем чĕнсе каланине сӳтсе-явнă хыççăн, çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Колхоз вăрлăхсене тасатса çитернĕ. Вĕсен пахалăхне районри вăрлăх лабораторийĕ тĕрĕслесе тухнă, вăрлăхсем пурте кондицие лараççĕ. Ялхуçалăх машинисене юсаса лартнă, вĕсем паянах ĕçе тухма хатĕр. Начар лашасене вăйлă апат çине тата канма тăратнă. Лашасене конюхсем мĕнле пăхнине правлени членĕсемпе бригадирсем тата комсомолецсем тĕрĕслесе тăраççĕ. Çураки ирттермелли ĕç планне те тунă.

Комсомолецсемпе колхозри çамрăксем республика уявĕ тĕлне колхоз клубне юсама, ун тавра йывăççем лартма пулнă. Колхоз, кӳршĕри «Чамыш» колхозпа пĕрле, Шетмĕ шывĕ çинче электростанци лартма шутлать. Халĕ строительство материалĕсене хатĕрлеççĕ.

Колхозниксем республика уявне 1945 çулшăн государствăна сĕт, аш, çăм, çăмарта памалли обязательствăсене пурнăçланипе кĕтсе илме йышăнчĕç.

Республика 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва «Сила», Войков ячĕпе тăракан, «Янмурзино», «Малалла» тата ытти колхозсем те хутшăннă.

Ив. ХАТАЕВСКИЙ.

Примерлă финанс агенчĕ

Михаил Дмитриевич Герасимов юлташ Куславкка районĕнчи Воробьевка ял Советĕнче финанс агенчĕ пулса кăçалхипе çиччĕмĕш çул ĕçлет ĕнтĕ. Вăл 70 çулта. Хăйне финагент ĕçне панипе вăл кăмăллă; хăйĕн тивĕçпе юратса пурнăçласа пырать. Герасимов юлташ ял Советĕнчи укçа-тенкĕ пухмалли плана яланах срокчен тултарать. Сăмахран, иртнĕ квартал планне - икĕ уйăх çурă хушшинчех 123 процент тултарнă.

Михаил Дмитриевич ĕçлекен ял Советĕнче укçа-тенкĕ енĕпе парăмлисем çук. Герасимов юлташ халăх хушшинче ĕçлеме пĕлет. Çавăнпа ăна пурте хисеплеççĕ. унăн авторитечĕ пысăк.

Финанс ĕçĕн отличникĕ Герасимов юлташ нумай пулмасть финанс работникĕсен республикăри канашлăвĕнче пулчĕ. Вăл унта сăмах туса каласа, хăйĕн опычĕпе паллаштарчĕ.

«Государствăна кирлĕ укçа-тенкĕне пухса парассп,—терĕ вăл,—халăхи вăхăтра пысăк ĕç пулса тăрать. Сак ĕçе эпĕ юратса туса пыратăп. Анчах та ĕçре хăшпĕр чух йывăрлăхсем те пулкалаççĕ. Хăшпĕрисем налог парăмĕсене вăхăтра тӳлемеççĕ. Ун пеккисемпе уйрăмăн ĕçлеме тивет, вĕсене государствăна тивĕçлĕ укçа-тенкĕне вăхăтра тӳлеме кирли çинчен ăнлантарса паратăп, ял Советне чĕнсе те калаçатăп. Ĕçре мана ял Совет председателĕ Кораблев юлташ пулăшса пырать».

Герасимов юлташ канашлура обязательство илчĕ: иккĕмĕш кварталта укçа-тенкĕ пухмалли плана Чăваш республики 25 çул тултарнă тĕле тултарма пулчĕ. Канашлура пулнисене пурне те хăй пек ĕçлеме чĕнчĕ.

Республикăри финанс работникĕсен пурин те Михаил Дмитриевичран пример илмелле, унра ĕçлеме вĕренмелле. Тăрăшса ĕçлесен, укçа-тенкĕ пухмалли плана кашни налог агенчех вăхăтра тултарма пултарать.

И. ЗОЛОТНИКОВ,
Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕ.

Сан-Франциско хулинчи конференцие каймалли делегатсен йышне ӳстерни

Совет Правительстви Пĕрлешнĕ Нацисен Сан-Франциско хулинче пулса иртмелли конференцие Совет Союзĕнчен тата икĕ делегат яма уйăрнă. Вĕсем çаксем: Проф-союзсен Пĕтĕм Союзри Центральнăй Совечĕн Председателĕ В. В. Кузнецов тата РСФСР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ А. И. Лаврентьев.

Сан-Франциско хулинче пулса иртмелли конференцие Польша хутшăнасси çинчен

Мирпе хăрушсăрлăха сыхласа тăмалли пĕтĕм тĕнчери организацие туса хурас тĕлĕшпе апрелĕн 25-мĕшĕнче Сан-Франциско хулинче пулса иртмелли конференцие Польшăна чĕнес пирки Совет правительстви Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Великобританин тата Китайăн правительствисене чĕнсе калани çинчен совет пичетĕнче пĕлтернĕччĕ. Совет правительствин çав чĕнĕвĕнче çапла каланăччĕ: Польшăн Вăхăтлăх правительствине сывăх вăхăтра çĕнетсе çитереймесен, Сан-Франциско хулинче пулса иртмелли конференцие Польшăн Варшавăри Вăхăтлăх правительствин представителĕсене чĕнмелле, мĕншĕн тесен вăл правительство Польшăн пĕтĕм территорийĕнче власть тытса тăрать тата ăна Польша халăхĕ пулăшса тăрать, тенĕччĕ.

Авторитетлă вырăнсенчен илнĕ хыпарсем тăрăх, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тата Великобританин правительствисем, Совет правительстви чĕнсе калани çине ответлесе, çапла пĕлтернĕ: Польшăн Вăхăтлăх правительствине çĕнетиччен ăна Сан-Франциско хулинче пулса иртмелли конференцие чĕнме май килмест тесе шутлаççĕ, тенĕ. Китай правительстви Совет правительствине панă хăйĕн ответĕнче каланă тăрăх, ку ыйтупа вăл решени йышăнман-ха. Решени йышăнманнине Китай правительстви çапла ăнлантарса панă: Британипе Америка правительствисем ку сĕнӳпе килĕшмен пирки, Китай правительстви килĕшнипе килĕшменни практикăра питех кирлĕ пулса тăмасть, тенĕ.

Шанчăклă вырăнсенчен пĕлтернĕ тăрăх, Совет правительстви Сан-Франциско хулинче пулса иртмелли конференцире Польшăн Вăхăтлăх правительствин представителĕсене обязательнă чĕнмелли çинчен хăйĕн сĕнĕвне пурнăçлассишĕн тăрать. (ТАСС).

БРИТАНИ ХАЛĂХĔСЕН УШКĂНĔН КОНФЕРЕНЦИЙĔ

ЛОНДОН, апрелĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Британи халăхĕсен ушкăнĕн представителĕсем Сан-Франциско хулинче пулмалли конференцие хатĕрленес шутпа ирттернĕ конференци хыççăн ĕнер заявлени пичетлесе кăларнă. Вăл заявленире каланă тăрăх, Пĕрлешнĕ Нацисем вăрçă хыççăн та таччăн пĕрлешсе ĕçлени кăна тĕнчери правительствăсемпе халăхсем хушшинче кĕрешӳ сиксе тухассине чарса лартма пултарать. Пĕрлешӳллĕ королевствăн, Канадăн, Австралин, Çĕнĕ Зеландин, Кăнтăр Африка Союзĕн тата Индин представителĕсемпе пĕрле пĕлтернинче çапла каланă: «Британи халăхĕсен ушкăнне кĕрекен çĕршывсем тĕнчере мирпе хăрушсăрлăх тытса тăрас тата этемлĕхе лайăх пурнăç парас тĕлĕшпе тăвакан пĕтĕм тĕнчери организацие анлăн хутшăнма хатĕр», тенĕ.

Югослави халăхĕсем Совет Союзĕпе Югослави хушшинчи договора саламлаççĕ

БЕЛГРАД, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Югославин пур кĕтесĕсенчен те Совет Союзĕпе Югослави хушшинчи договора Югослави халăхĕ пысăк хаваслăхпа йышăнни çинчен пĕлтерекен хыпарсем килсе тăраççĕ. Апрелĕн 12-мĕшĕнче Пожаревац хулинче Халăх ирĕклĕхĕн площадĕнче 4.000 çын ытла пухăннă. Пысăк митинг пулса иртнĕ. Митинг хыççăн халăх уявĕ пулнă. Тепĕр кун хулана таврари ялсенчен капăр тумланнă хресченсем пыма пуçланă. Вĕсем Сталин Маршалпа Тито Маршалăн портречĕсене çĕклесе пынă. Демонстраци мĕн касчченех пынă.

Кралево хулинчи йышлă демонстрацие хула çыннисемсĕр пуçне тата Ужицк районĕнчи хресченсем те пулнă. Хулан тĕп площадĕнче нумай çынлă митинг пулса иртнĕ. Митингра тухса каланă рабочисемпе хресченсем Югослави пуласлăхĕшĕн договор мĕн тери паха пулса тăни çинчен, çав договор Югослави халăхĕсен авалхи ĕмĕтне пурнăça кĕртни çинчен каланă.

Нумай çынлă митингсем Чачакра, Валево округĕнче тата Югославин ытти хулисемпе ялĕсенче те пулса иртнĕ.

ПОЛЬША ХАÇАЧĔСЕМ СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ЮГОСЛАВИ ХУШШИНЧИ ДОГОВОР ÇИНЧЕН

ВАРШАВА, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Польша хаçачĕсем Совет Союзĕпе Югослави хушшинчи договор çинчен нумай çыраççĕ тата йышлă митингсем çинчен калакан отчетсемпе резолюцисем пичетлесе кăлараççĕ.

«Глос люду» хаçат хăйĕн уместатьинче çапла çырать: «Совет Союзĕпе Югослави договор туни çинчен илтсен, пирĕн халăх хушшинче Польша та Совет Союзĕпе çавăн пек договор часрах тутăр тесе ыйтасси анлăн сарăлса кайрĕ. 1939 çулхи сентябрь уйăхĕнчи йывăр опыт пире çакна кăтартса пачĕ: пĕччен тăрса юлнă Польша, славян халăхĕсенчен пулăшу илменскер, нимĕçсен фашистла захватчикĕсене тапăнса кĕме чараймарĕ, нимĕç империализмне хирĕç тăма пултараймарĕ... Ку вăрçă хыççăн эпир халиччен пулнă Польша пек мар, вăйлăрах Польша тума пуçласшăн. Ку питĕ пысăк та паха задача пулса тăрать. Çак задачăна эпир хамăрăн хăрушсăрлăха ĕненсе тăрсан çеç татса пама пултаратпăр. Çакна эпир Совет Союзĕпе туслă пурăнасси çинчен договор тусан çеç пурнăçлама пултаратпăр».

«Газета любельска» та çавăн пекех Совет Союзĕпе Польшăн договор тума кирлине кăтартса парать.

«Польша халăхĕ,—çырать «Житя Варшава» хаçат,—хăйĕн Хĕвелтухăçĕнчи вăйлă кӳршипе туслăх договорĕ тăвасшăн», тет.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе каларнă пĕлтерӳре каланă тăрăх, Арнгем хулине тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă. Союзниксен çарĕсем, Арнгемран иртсе, Делен хули патнелле кусса пыраççĕ.

Союзниксен Регем хулинчен çурçĕртерехри Аллер шывĕ çинчи укрепленинe, нимĕçсем вăйлăн хирĕç тăнă пулин те, 6,5 километр аслăлатнă.

Союзниксен танковăй чаçĕсем 19 километр тăршшĕ участока йышăнса тăраççĕ. Эльба шывĕн хĕвеланăç хĕрринче Зехаузен хули çывăхĕнче, Стендаль хулине тăшмантан тасатнă. Союзниксем вăл хуларан 13 километр малалла иртсе кайнă. Хемниц хулинчен 32 километр çурçĕртерехре, Мульде шывĕ çинче, союзниксем 9,5 километр тăршшĕ участока йышăннă.

Союзниксен чаçĕсем Нюрнберг хулинчен 24 километрта тăраççĕ.

Кăнтăр тата çурçĕр енчен куçса пыракан союзниксен чаçĕсем Вестер патĕнче пĕрлешнĕ хыççăн Рур «миххине» икĕ пая татса пăрахнă.

Апрелĕн 14-мĕшĕнче Хĕвеланăç фронтĕнче союзниксем 87.779 çынна тытка илнĕ.

АНГЛИ КОРРЕСПОНДЕНЧĔ ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНТĔНЧИ ЛАРУ-ТАРУ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, апрелĕн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин американецсен 3-мĕш армийĕпе пĕрле çӳрекен корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: «Германи хулисем вăйăри пекех парăнаççĕ. Оборона валли усăллă шывсем, сăмахран, Заале, Вейсе тата Мульде шывĕсем урлă та пысăк йывăрлăхсăрах каçса кайнă».

Каярахпа пĕлтернинче корреспондент çапла каланă: нимĕçсем йĕркеллĕн хирĕç тăрса кĕрешесси пытланса ларчĕ, тенĕ.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ПОТСДАМПА БЕРЛИНА ТАПАННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕн самолечĕсем нимĕçсен Берлин хулинчен 29 миля хĕвеланăçнерехре ларакан транспорт узелне—Потсдама вăйлăн тапăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи авиацийĕн бомбардировщикĕсем Берлина тапăннă.

ЛОНДОН, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, апрелĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи самолечĕсем 2 сехет хушшинче Берлина 3 хут пырса тапăннă. Англи самолечĕсен экипажĕсем Потсдамра пушарсем курнă. Вăл пушарсем апрелĕн 15-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пырса тапăннă хыççăн тухнă пулнă.

СОЮЗНИКСЕН ВĂТАÇĔР ТИНĔС ТАВРАШĔНЧИ ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙĔСЕН ШТАБĔ ПĔЛТЕРНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавраш-ĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: 8-мĕш армин чаçĕсем Имола хулинчен çурçĕрхĕвеланăçнерехре наступлени туса пынă. Силлара шывĕ çинче тата тепĕр укреплени туса хунă. Комакио кӳллинчен кăнтăрхĕвеланăçнерехре Англи чаçĕсем Бастия пункчĕ патне çитнĕ. 5-мĕш армин вăтаçĕрти сăртлă секторĕнче союзниксен çарĕсем, тăшман хирĕç тăнине çĕмĕрсе тăкса, икĕ çуллĕ вырăна тытса илнĕ. Лигури çыранĕ хĕрринче союзниксен çарĕсем малалла кусса пыраççĕ.

БРИТАНИ ХАЛĂХĔН УШКĂННЕ КĔРЕКЕН ХĔÇПĂШАЛЛĂ ВĂЙСЕН ÇУХАТĂВĔСЕМ ÇИНЧЕН ЧЕРЧИЛЛЬ КАЛАСА ПАНИ

ЛОНДОН, апрелĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, премьер-министр Черчилль общинăсен палатинче ĕнер çапла пĕлтернĕ: вăрçă пуçланăпăран вара кăçалхи февралĕн вĕçне çитиччен Британи халăхĕсен ушкăнĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕр миллион та 126 пин те 802 çын пĕтнĕ, вăл шутра 306.984 çын вилнĕ.

Пĕрлешӳллĕ королевствăн хĕçпăшаллă вăйĕсен сухатăвĕ 685.638 çын шутланать, Канадăн—89.220 çын, Австралин—87.256 çын, Индин—163.486 çын тата ытти те.

Вăрçă пирки Пĕрлешӳллĕ королевствăри гражданла халăх хушшинче, Черчилль каланă тăрăх, 144.542 çын пĕтнĕ.

ФРАНКО ЧЕЕЛЕННИ

ЛОНДОН, апрелĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Франко правительстви Японипе дипломатилле çыхăну тытма пăрахнă.

Рейтер агентствин дипломатилле обозревателĕ Рендел Мил çапла çырать: Испанипе Япони хушшинчи дипломатилле çыхăнăва татасси çинчен Мадридра малтанах нумай çырнă пулин те, Лондонра ăна пĕр Испани çеç тивĕскен ĕç тесе шутлаççĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Пысăк тухăçлă хăмлашăп

Пирĕн республикăра хăмла лартса тăвас тĕлĕшпе 174 колхоз ĕçлет. Çав колхозсенче хăмла вырăнĕсем йышăнакан çĕр лаптăкĕ 355 гектар ытларах шутланать. Хăмла лартса тăвакан колхозсем Октябрьски, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Çĕрпӳ, Гăрмар тата Чурачăк районĕсенче пуçйрах.

СССР Совнаркомĕ йышăннă тăрăх, государствăна панă хăмлан кашни центнерĕ 1 центнер тулă е ытти тырă вырăнне шутланать. Унсăр пуçне хăмла панăшăн промтаварсем параççĕ. Планран ирттерсе хăмла панăшăн хăмла хакĕ çумне 50 процент таран хушса тӳлеççĕ. Çав премирен 85 процентне хăмла туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе параççĕ.

1941 çулта пирĕн республикăри колхозсем 64.000 пăт тырă вырăнне хăмла панă, 320.000 тенкĕлĕх промтавар илнĕ. Çав преми укçинчен ĕçкунĕ çумне хушса тӳлемелли йĕрке тăрăх 195.000 тенкĕ валеçнĕ. Октябрьски районри «Красная Чувашия» колхоз иртнĕ çул кашни гектартан 11-шер центнер хăмла туса илнĕ. Колхоз государствăна 420 центнер тырă парас вырăнне пĕтĕмпех хăмла панă. Унсăр пуçне хăмлашăн 250.000 тенкĕ укçа илнĕ. Хăмла туса илес тĕлĕшпе ĕçлекен колхозниксене хушса тӳлемелли премин укçине 27.000 тенкĕ валеçнĕ. Çав колхоз ĕçкунĕсем тăрăх 1.5-шер килограмм тĕштырă валеçнĕ. Вăл шутран хăмла туса панăшăн илнĕ тырă кашни ĕçкунĕ пуçне 1 килограмм тивнĕ.

Хăмла пысăк тухăçлă культура, анчах ăна лартса тăвасси çăмăл ĕç мар. Çак ĕçре колхозниксен ывăнма пĕлмесĕр ĕçлеме тивет.

«Красная Чувашия» колхозра хăмла лартса тăвас тĕлĕшпе ятарласа уйрăм бригада ĕçлет. Бригадăра звеносем пур. Вĕсем çумне уйрăм участоксем тата хăмла пăхса çитĕнтерес ĕçре кирлĕ ĕç хатĕрĕсем çирĕплетсе панă. Бригада, çуркуннерен пуçласа, кĕркунне хăмла пухса иличчепех хăмла вырăнĕнче ĕçленĕ. Шучăсем хушшине вăхăтра пралуксем карнă тата хăмла явăнса хăпармашкăн шпагатсем çакнă. Хăмла вырăнне çумкурăкĕсенчен тасатнă, хăмла тымарĕ тавраш-ĕнчи тăпрана кăпкалатса алăпа купаланă. Çуркунне хăмла вырăнне çĕрнĕ тислĕк тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ нумай тăкнă. Хăмла тĕпĕсене купаланă чухне çĕрнĕ тислĕкпе апатлантарнă. Хăмлана спен кӳрекен хĕрлĕ эрешменрен тата ытти хурткăпшанкăран сыхланас шутпа, хăмла аврине çĕртен пуçласа 30 сантиметр çӳллĕшне çитиччен çулçăсене татса пăрахнă. Хăмла тухăçлăхне ӳстерес тесе, юпа тăррине карнă пралуксенчен иртсе кайнă хăмла аврисене тата-тата пăрахнă. Хăмла плантацийĕнче ĕçлекен колхозниксен ĕç тухăçлăхне ӳстерес шутпа, çуркуннепе кĕркуннехи хĕрӳ ĕç вăхăтĕнче хăмла плантацийĕнчех пĕрлешӳллĕ столовăй организациленĕ.

Çумкурăкĕсенчен тасатса тăрас тата тăпрара ытларах нӳрлĕх тытса тăрас тесе, хăмла лартнă йăран хушшисене плугпа тарăн сухаланă, культиваторпа темиçе хут кăпкалатнă, хăмла лартнă йăрансене алăпа çумласа таса тытса тăнă.

Кăçал «Красная Чувашия» колхоз кашни гектартан 13-шер центнертан кая мар хăмла туса илес задача лартнă. Çак задачăна ăнăçлăн пурнăçлас тесе, хăмла туса илекен бригада членĕсем пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ.

Çак колхозăн ĕç опычĕ пирĕн республикăри ытти колхозсем те тухăçлă хăмла çитĕнтерсе, пысăк тупăш илме пултарнипе çирĕплетсе парать.

В. ДЕРЯБИН,
Росхмель конторин научнăй сотрудникĕ.

Суту-илӳ работникĕсен республикăри канашлăвĕ

Апрелĕн 13—14-мĕшĕсенче Шупашкарта суту-илӳ организацийĕсен, обществăлла апатлану предприятийĕсен руководителĕсен республикăри канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура промышленность предприятийĕсен директорĕсем, районсемпе хуласенчи суту-илӳ отделĕсен заведующийĕсем тата райпотребсоюз председателĕсем пулчĕç.

Канашлу виçĕ ыйту сӳтсе-явнă. 1945 çулта халăха тавар парса тăрас ĕçе лайăхлатмалли мероприятисем çинчен Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссарĕ П. Братчиков юлташ доклад туса пачĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче таварăн ытларах пайĕ фронт нушисене тивĕçтерме каять пулин те, ĕççыннисем тавар туянасси ӳсрĕ. 1940 çулта республикăри кашни çын 321 тенкĕлĕх тавар туяннă пулсан, 1944 çулта 373 тенкĕлĕх туяннă. Иртнĕ çулта тавар çаврăнăш планне 102,2 процент тултарнă, планран ирттерсе 9 миллион тенкĕ тупăш панă.

Анчах та республикăри суту-илӳ ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Иртнĕ çулта обществăлла апатлануран тупăш илмелли плана тултарайман. Çак енĕпе уйрăмах потребкооперации системин обществăлла апатлану предприятийĕсем начар ĕçлеççĕ.

Пирĕн суту-илӳ организацийĕсем централизациленĕ йĕркепе паракан промышленность тата апат-çимĕç таварĕсене пĕтĕмпех кӳрсе килейменççĕ. Уйрăмах Военторг, Спецторг, Чăвашсоюз тата Чăвашторг апат-çимĕç таварĕсене кӳрсе килмесĕр нумай хăвараççĕ.

Республикăра промтаварсемпе суту-илӳ тăвас ĕçе начар йĕркеленĕ. Ча кирлĕ промтаварсене кӳрсе килмелли плана тултарман. Промтаварсене кӳрсе килес тĕлĕшпе Текстильсбытпа Главлегсбыт базисем сӳрĕк ĕçлеççĕ. Суту-илӳ организацийĕсен руководителĕсемпе тавар базисен директорĕсем панă промтаварсене пĕтĕмпех илсе килессишĕн начар кĕрешеççĕ.

Ĕççыннисене ялхуçалăх продукчĕсем парса тăрас ĕçре колхозсен суту-илĕвĕ пысăк вырăн йышăнса тăрать. Анчах та пирĕн республикăра колхозсен суту-илĕвне начар йĕркеленĕ. Районсенчи суту-илӳ пайĕсем çак ĕç çине çавăрăнса пăхмаççĕ. Ялхуçалăх продукчĕсене базарсене ытларах кăларас тĕлĕшпе никам та ĕçлемест.

Братчиков юлташ доклачĕ тăрăх прение 25 çын тухса калаçрĕç. Вĕсем суту-илӳ ĕçĕнчи çитменлĕхсем çинче чарăнса тăчĕç, малашнехи задачăсене палăртрĕç тата хăйсем мĕнле ĕçлени çинчен каласа кăтартрĕç. Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ Ф. Семенов юлташ республикăри суту-илӳ организацийĕсен ĕçне тĕплĕн тишкерчĕ, çитменлĕхсем мĕнрен килнине кăтартса пачĕ. Прение СССР Хатĕрлев Халăх Комиссариачĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ Г. Федотов, Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссарĕн заместителĕ В. Таврин, Юстици Халăх Комиссарĕн заместителĕ С. Чумуркин, республика прокурорĕн заместителĕ Г. Быстричкин, Военторг начальникĕ Б. Енисеев тата ытти юлташсем те тухса калаçрĕç.

Суту-илӳ организацийĕсен çураки вăхăтĕнчи задачисем çинчен тата çĕрулмипе пахча-çимĕçсене упраса усрама хатĕрлесси çинчен Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссариачĕн подсобнăй хуçалăхсем енĕпе ĕçлекен отдел начальникĕ Б. Столяров юлташ доклад туса пачĕ.

Суту-илӳ тата обществăлла апатлану предприятийĕсен ĕçне вăйлатасси, вĕсене хуçалăхпа техника енчен тĕреклетесси çинчен канашлура Чăваш АССР Суту-илӳ Халăх Комиссарĕн заместителĕ В. Лебедева юлташ доклад туса пачĕ.

Канашлу вĕçленес умĕн парти Обкомĕн секретарĕ М. А. Андреев юлташ тухса калаçрĕ. Андреев юлташ пирĕн суту-илӳ организацийĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртрĕ, çак ĕçри хăшпĕр руководительсене культуралла суту-илӳ тума пĕлменнишĕн критиклерĕ. Унпа пĕрлех вăл çитменлĕхсене пĕтермелли майсене кăтартса пачĕ. «Çитменлĕхсене пĕтерме,—тет Андреев юлташ,—кадрсемпе ĕçлессинчен тытăнас пулать. Кадрсене тĕплĕн суйласа илсе, ĕçе тĕрĕс вырнаçтармалла, вĕсене пăхса ӳстерес тĕлĕшпе куллен ĕçлемелле».

Канашлура пулнисем Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Чăваш халăхĕн уявне ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тупипе кĕтсе илес тесе, конкретлă обязательствăсем илчĕç.

Канашлура пулнисем çав обязательствăсене пурнăça кĕртессишĕн ăмăртса ĕçлеме республикăри суту-илӳ тата обществăлла апатлану работникĕсене чĕнсе каларĕç, тăванла Мари республикинчи суту-илӳ работникĕсене социализмлă ăмăртăва чĕнчĕç.

Канашлура пулнисем питех те пысăк çĕкленӳпе Верховнăй Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ И. Сталин юлташ патне саламлă çыру яма йышăнчĕç.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—87, заместителĕн — 2—89, секретарĕн — 1—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 3—31, издательство конторин — 0—23.

КТ 03071. Типографи № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000